# Малта пыракансен хăйсен ыйтăвĕсем







Юсуф Галиуллович пусăрăнчăк кăмăллă та хаярччĕ.

- Эпĕ сире вăрçма мар, канашласа пăхма килтĕм. Сания аппа, мĕн пулчĕ? Мĕншĕн сĕт сахал?

Ферма заведующийĕ айăпа кĕнĕ евĕр хурав пама васкарĕ.

- Юсуф Галиуллович, хамăр та ăнланмастпăр. Выльăхсене кăнтăрла та, каçхине те кĕтеççĕ. Апат çителĕклĕ, юлать те. Рациона çирĕп пурнăçласа 4-шар килограмм фураж, 30-шар килограмм симĕс масса паратпăр. Мĕншĕн сĕт çуккине вара хамăр та ăнланмастпăр.

Калаçу малалла пычĕ. Район администрацийĕнче иртнĕ канашлуран тӳрех фермăна пынă председатель сĕт нумай суса илмелли çирĕп базăн мĕнпур условийĕсене шутлама тытăнчĕ: выльăхсем валли питĕ лайăх çуллахи лагерь пур, унта дояркăсене кунне икĕ хутчен автобуспа илсе каяççĕ. Апатпа вăхăтлă тивĕçтереççĕ, Зайдулла Мухамметов хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Выльăхсене çарансем çинче кĕтнисĕр пуçне, хушма апат та параççĕ, дояркăсем те опытлăскерсем, вĕсене ĕç укçи парас ыйтăва татса пама тăрăшаттăмха. Кăçал, çакăн пек апатпа 30-шар килограмм сĕт суса илмесен намăс. Халлĕхе вара кунта пĕр ĕнерен суса илнĕ сĕт 23,1 килограмм çеç шутланать, ку вăл пĕлтĕрхинчен 1,9 килограмм сахалрах.

Ферма заведующийĕ С.Тазиева хăйĕн сăлтавĕсене пĕлтерме тăрăшрĕ: çанталăк шăрăх тăнипе лару-тăру кăткăсланчĕ, акă юлашки кунсенче сĕт сисĕнмелле хушăнчĕ...

- Костер вырăнне люцерна памалла мар-ши?

- Вăл сĕтеклĕрех, усăллăрах пулĕччĕ, - терĕ вăл председательпе килĕшсе.

- Шухăшласа пăхăр. Дояркăсемпе тепĕр хут канашламалла пулать...

Заведующи дояркăсем патне кайрĕ. Сĕт суса илесси чакнин сăлтавĕ мĕнре? Çак ыйту ăна çеç мар, мĕнпур коллектива пăшăрхантарать. Пĕр енчен, 23,1 килограмм сĕт - районти чи лайăх кăтарту, чылайăшĕ çавăн чухлĕ сĕт суса илесси çинчен тĕлĕкре те курман. Анчах та, тепĕр енчен, Сания аппа майсене, мĕн чухлĕ сĕт суса илме пултарнине лайăх пĕлет. Иртнĕ çулхи кăтартусене вĕсем çак ĕнесенчен ку коллективпах тунă вĕт. Чăнах та, çак ӳсĕме тума çăмăл пулман. Ферма заведующийĕ дояркăсене питĕ лайăх пĕлет, вĕсенчен чылайăшĕ унпа пĕр çулхисемех, хăçан-тăр фермăна пĕрле чупнă. Астăвать-ха, 1962 çулта Сания амăшĕ - Миннису аппа чирлесен, Асия Рахматуллина унăн ушкăнне илнĕ. Кайран, кăшт вăхăт иртсен унăн хĕрсемĕ Бибинур Валиева, Сания аппа хăй, Сара Бакирова, Мунавара Ишниязова унта ĕçлеме тытăннă. Вĕсем фермăри мĕнпур йывăр ĕçе хăйсем пурнăçланă, савăнăça та, хуйха та пурте пĕрле чăтса ирттернĕ. Сания аппан пурнăçĕнчи чи пысăк хуйха - упăшки Якуб вилнине чăтса ирттерме те юлташĕсем пулăшнă. Якуб пичче те ферма заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Вăл çакна манать-и вара? Сания аппана ферма заведующийĕ пулма сĕнсен те вăл коллектива кăна шаннă. Йăнăшман, халь вĕсем тăрăшса тата килĕштерсе ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсем кашни ăнăçсăрлăхшăн мĕнле пăшăрханнине вăл лайăх ăнланать, мĕншĕн тесен кашни ăнăçлăха вĕсем пурте пĕрле, пĕрлехи ĕçпе тăваççĕ вĕт. 3 тата 4 пин килограмм сĕт суса илнине халĕ те астăваççĕ-ха. Кайран, пилĕк пин килограма та çитерни. Сăмахран, Сара Бакирова иккĕмĕш çул ĕнтĕ Акатуй ялавне çĕклеме тивĕç пулнă. Кунта вăл ырми-канми ĕçленине шута илнĕ. Кăçал вăл иккĕ пăрулană ĕнесен ушкăнĕнче ĕçлет, кунне 25-шер килограмм сĕт суса илет.

- Ăна ялан лайăх ĕнесем лекеççĕ, - теççĕ дояркăсем. - Чăнах та, халь выльăхсем те пысăк продуктивлă та çӳллĕскерсем. Ĕнесем сĕт пама тытăниччен дояркăна мĕн чухлĕ вăй хума тӳр килет вĕт. Сара çамрăк ĕнене массаж тумасăр сума тытăнманнине Сания аппа питĕ лайăх пĕлет. Çакăн пек вак-тĕвекрен пуçтарăнать те ĕнтĕ ăнăçлăх пуласси.

Кĕскен каласан, кондурчинецсем пăрусемпе ĕçлессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Вата ĕнесем вырăнне çамрăк пăрусем пуçтараççĕ. Вĕсенчен чи сыввисене, самăррисене суйласа илеççĕ те сăвакан ĕнесем тума хатĕрлеме тытăнаççĕ. Сăмахран, хальхи вăхăтра Мунавара Ишниязова пĕрремĕш хут пăруланă ĕнесене сăвать, унăн ушкăнĕнче пĕр ĕнерен талăкра вăтамран суса илнĕ сĕт 25 килограмм шутланать.

Мукарряма Мунасыпован ушкăнĕнчи ĕнесем виççĕмĕш хут пăруланă. Çапла майпа сăвакан ĕнесен шучĕ хурашурă ĕнесем хушăннипе ӳсет. Çитес çывăх çулсенче тата çичĕ ушкăна çĕнетме шутлаççĕ.

Çапла, Сания аппа ферма ĕçченĕсене пурне те аса илчĕ. Газинур Абзалимов, Насыбулла Бикташев, Фаиз Абзалимов кĕтӳçĕсем те тăрăшса вăй хураççĕ. Кĕскен каласан, кашни хăйĕн вырăнĕнче. Вĕсен хушшинче чи çамрăкки слесарь-вакуумщик Ригаз Гумеров, вăл та вăйне шеллемесĕр тăрăшать. Коллективра ăна пурте юратаççĕ, хăйсен ывăлĕ вырăнĕнче шутлаççĕ. Икĕ çул каярах, фермăран тенĕ пекех, ăна салтака илсе кайнă, яша йĕркеллĕ, кирлĕ пек ăсатайман та. Тавах турра, тĕрĕс-тĕкел таврăннă та тӳрех фермăна пынă. Вăл мĕнпур ĕçе пултарать, унпа пурте кăмăллă.

Сания аппа сăнчăрсем чăнкăртатнине те, ĕнесем мĕкĕрнине те, дояркăсем пĕр-пĕринпе калаçнине те илтмерĕ пулас, вăл шухăша путнă. Ĕнесене суса пĕтернĕ хыççăн тӳрех выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе тепĕр хут калаçса пăхма шутларĕ. Кам пĕлет, тен, пĕрле сӳтсе явнă чухне тĕрĕсрех решени йышăнма пултарĕç. Ыранах люцерна пама тытăнмалла. Çук, 23 килограмм сĕт суса илекен коллектив тунă ăнăçлăха çухатма, хăйне критикленине чăтма пултараймасть. Вĕсен сĕт суса илессине ыранах ӳстермелле!

Çак шухăшпа Сания аппа дояркăсем патнелле утрĕ...

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**
**"Кондурча" ассоциаци.**

**Ӳкерчĕксенче: А.Рахматуллина доярка; лашасем пăхакан Р.Абдуллин; выльăхсем улăхра.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсем.**

## Иккĕмĕш смена пуçланчĕ

Иккĕмĕш номерлĕ шкулта ачасен канăвне интереслĕ те усăллă ирттереççĕ. Тунтикун "Мечта" лагерь иккĕмĕш сменăри ачасене кĕтсе илчĕ. Пĕрремĕш сменăра кунта 45 ача каннă. Кунта ачасене лайăх кантарасси çинчен кăна шухăшламан, вĕсене ĕçлеттерессине те йĕркеленĕ. Кунсерен шкул çумĕнчи участокра 20 яхăн ача вăй хурать. Кунсăр пуçне районта ĕçпе тивĕçтерекен бюро урлă кунта 26 вĕренекен ĕç тупнă. Вĕсенчен 7-шĕ МППра вăй хураççĕ, 13-шĕ - РСУра тата 6-шĕ шкулти юсав ĕçĕсене тунă çĕрте.

*К а н и к у л*

## Кичем мар

Пирĕн "Солнышко" лагерь июнĕн 8-мĕшĕнче уçăлчĕ. Ачасем лагере кăмăлласах çӳрерĕç - кунта питĕ интереслĕ вĕт-ха, юлташсем, вăрманти кăвайт умĕнчи каçсем... Канăва чăнахах та лайăх йĕркеленĕччĕ: ачасем юханшыв хĕррине шыва кĕме çӳрерĕç, интереслĕ вăййасем выляреĕç, конкурссем, спорт ăмăртăвĕсем ирттерчĕç, экскурсисенче пулчĕç. Çакăн пек интереслĕ канушăн ачасем пĕрремĕш смена ертӳçисене Нагима Хафизовапа Фануза Хакимова учительсене тав тăваççĕ. Сакина аппапа Гульфия аппа поварсем ачасене тутлă апатсемпе сăйларĕç. Çав вăхăтрах ачасем шкул çумĕнчи участокра та активлă вăй хучĕç. Çула çитмен çамрăксемпе аслă класcенче вĕренекенсенчен производство бригади йĕркелерĕç. Юсав бригадин членĕсем те ăнăçлă вăй хураççĕ.

**Р.САЛАХОВА.**
**Хумаелĕнчи вăтам шкул.**

*Хăна юррисем*

## Çак тăвансем патне килсессĕн

Манăнах та çӳçĕм хура кăтра -
Хăш хĕрринчен тытса турам-ши?
Сĕтел йĕри-тавра хăна-вĕрле -
Хăшĕн умне тăрса юрлам-ши?

Кукăрах ӳрече, ай, кăп тупан,
Хăш ӳречи çине ларам-ши?
Ларсассăн та ларăп сылтăм енне,
Эпĕ сулахайне ларас çук.

Ах, тăванăм, тетĕп, ах, тăванăм,
Хăш урăнтан тытса пуççапас?
Тытсассăн та тытăп сылтăммине,
Эпĕ сулахайне тытас çук.

Шурăрях кăмака, симĕс кĕрнечĕ,
Кирлĕ марччĕ симĕс сăрлама.
Çак тăвансем патне, ай, килсессĕн,
Кирлĕ марччĕ мана юрлама.

Хура вăрман çине пĕлĕт туртсан,
Çавăнтан пĕлĕр çумăр çунине.
Урапа çавăрса пар ут кӳлсен,
Çавăнтан пĕлĕр тăванăр кайнине.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.



*Тăван ен*

## Тата тепĕр çĕнтерӳ

Нурлатри çамрăксемпе ачасен спорт шкулĕнчи футболла вылякансен команди 1983-1984 çулсенче çуралнă яшсем хушшинче "Сăран мечĕк" парнене илессишĕн иртекен республикăри финал ăмăртăвĕсене хутшăнса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Кунта уйрăмах Саша Ундалов (хулари виççĕмĕш номерлĕ шкул), Дима Воскобойник (пĕрремĕш номерлĕ шкул), Марат Мирзазянов (тăваттăмĕш шкул) Дима Кистенев (виççĕмĕш номерлĕ шкул) палăрчĕç. Сарман районĕнчи Джалиль рабочи поселокĕнче июнĕн 24-29-мĕшĕсенче иртнĕ финал ăмăртăвĕсем пирĕн спортсменсемшĕн пысăк тĕрĕслев пулчĕç. Çамрăк спортсменсем А.В.Хардин тата Ю.Д.Кочетков ертсе пынипе июнь уйăхĕ тăршшĕпех тренировкăсем иртрĕç, тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнчĕç. Çапла, республикăри зонăри ăмăртусене хутшăнса, вĕсем лайăх результатсем тунипе пĕрлех ытти спортсменсемпе тĕл пулчĕç, опыт пухрĕç. Çав вăхăтрах çакă спорт шкулне çӳрекен 445 ачаран (кунта филиалсем те кĕреççĕ) пултаруллăраххисене, тăрăшуллăраххисене суйласа илсе вĕсемпе уйрăм ĕçлеме май парать.

Темиçе çул хушши ĕнтĕ пирĕн çамрăк футболистсем малти вырăнсене йышăнни пире савăнтарать, эпир хулапа район администрацине ачасене ăмăртусене хутшăнма пулăшнăшăн тав тăватпăр.

А.ХАРДИН,
ДЮСШ директорĕ.

## 01 пĕлтерет

Тутарстан республикин патшалăх пушар надзорне халăх йышлă пулакан объектсенче час-часах пушар тухни пăшăрхантарать. Çапла, 1997 çулта палăртнă объектсенче пулнă 129 пушар 260 миллион ытла тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Кăçалхи 4 уйăхра 40 пушар регистрациленĕ. Вут-çулăм уйрăмах яллă вырăнсенче халăх йышлă пулакан объектсенче темиçе çул хушши электрохуçалăха тĕплĕ юсав ирттерменнипе тухать. Çапла, Бикулово, Чулпан, Хуралту ялĕсенчи ача-пăча сачĕсенче, Чулпанти ватăсен çуртĕнче электропроводка питĕ япăх шайра. Ача сачĕсен 80 процентне пушар сигнализацине оборудованилемен. Вут-кăвартан сыхланмалли мероприятисене (шывпа тивĕçтересси, автоматла пушар сигнализацийĕ) пурнăçламаççĕ. Ачасем вутпа вылянипе пушарсем тухассине сирсе ярас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

Сăмахран, кăçалхи майăн 12-мĕшĕнче Чистай хулинчи ача çуртĕнче ачасем вутпа вылянипе пушар тухса, мачча тăррин 40 тăваткал метрĕ çунса кайнă. Пушар хуралĕн тивĕçтерекен персоналĕ оперативлăх кăтартнипе 91 воспитанника тата çуртне хăтарса хăварнă.

**Патшалăх пушар надзорĕ граждансене пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнасси тата вут-кăварпа асăрхануллă пуласси çинчен тепĕр хут аса илтерет.**

Нурлатри ПЧ патшалăх пушар надзорĕ.

## Пĕлтерӳсем

*Хуралту сывăхĕнче тĕмсем лартнă дача, элетронагреватель (ЭВАН) васкавлă сутăнаççĕ. Телефонсем: 2-27-70, 2-14-22.*

* * *

*Менделеевск хулинчи 5 хутлă çуртăн 4-мĕш хутĕнчи пĕр пӳлĕмлĕ приватизациленĕ хваттере Нурлат хулинчи çавăн пек хваттерпе улăштаратпăр. Телефон: 5-31-51.*

* * *

*Виççĕмĕш номерлĕ шкултан 1981 çулта 10 "В" класра вĕренсе тухнисен тĕлпулăвĕ августăн 1-мĕшĕнче 12.00 сехетре виççĕмĕш номерлĕ шкул умĕнче пулать.*

* * *

*Радиотелефон тата çуна çинчи гараж сутăнать. Телефон: 5-25-88.*

* * *

*"Урал" мотоцикл сутăнать. Адрес: Заводская урамĕ,22-15.*

* * *

*ВАЗ-21061 сутăнать. Телефонсем: 2-15-35 (килти), 2-16-09 (ĕçри).*

* * *

*"Москвич-412" сутăнать. Телефон: 5-36-69.*

* * *

*Суворов урамĕнче çурт сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 5-20-68.*

* * *

*"Надежда" ПП ĕçлеме автобус водителĕ кирлĕ. Телефон: 2-13-61.*

* * *

*1998 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен автомат меслечĕпе вырăнти телефон çыхăнăвĕн абонент тӳлевĕ пĕр уйăхшăн 32 тенкĕ пулать.*

*1998 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнчен автомат меслечĕпе тата телефонист пулăшнипе паракан хуласем хушшинчи телефон çыхăнăвĕсен çĕнĕ тарифĕсем вăя кĕреççĕ. Эрнери ĕç кунĕсенче 22.00 сехетрен пуçласа ирхине 6.00 сехетчен, шăматкунпа вырсарникун, уяв кунĕсенче талăк тăршшĕпе тариф хакĕ 50 процент пулать.*

*РУЭС администрацийĕ.*
*ТР çыхăну Министерствин 80-мĕш номерлĕ приказĕ.*

## Пĕлтерӳсем

**Хĕвелтухăç микрорайонĕнче мунча лартнă участок сутăнать. Бауман урамĕнчи 8-мĕш çуртра 11.00 сехетчен ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Декабристсен урамĕнче çурт сутăнать. Телефонсем: 5-21-86, 2-21-74 (18.00 сехет хыççăн).**

* * *

**Куйбышев урамĕнчи 86-мĕш номерлĕ çуртри "Шанс" магазин сутăнать. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх,тĕрлĕ майсем пулма пултараççĕ. "Шанс" магазинта е Куйбышев урамĕнчи "Радуга" магазин умĕнчи "Регина" магазинта 9.00 сехетрен пуçласа 18.00 сехетчен ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**6 çулхи çӳрен ăйăр çухалнă, çамки çинче шурă пăнчă. Вăл ăçта пулнине Чурапаттăр ялĕнчи Николай Колесникова пĕлтермелле.**

* * *

**11 сотка участоклă çурт, сĕтел-пукан сутатпăр е пур енчен те хăтлă хваттерпе улăштаратпăр. Телефон: 5-30-70.**

* * *

**Лайăх шайри ВАЗ-21013 сутатпăр. Адрес: Хĕвеланăç поселокĕ, 119-мĕш позици, Зайнуллинсем (17 сехет хыççăн).**

* * *

**Хула варринче икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Промышленная урамĕ, 10-4, 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Пулă тытмалли тĕрлĕ тетелсем сутатпăр. Телефон: 2-27-69.**

* * *

**1984 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 сутатпăр. Телефон: 2-17-19.**

* * *

**1983 çулта туса кăларнă ВАЗ-2101 сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 124-12.**

* * *

**ВАЗ-2111 сутăнать, хакĕ 4 миллион тенкĕ. Аксу районĕнчи Кивĕ Киязлы ялĕнчи Рашит Ахметовран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-27-15.**

* * *

**Сахăр завочĕн микрорайонĕнче иккĕмĕш хутра пур енчен те хăтлă пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 11-95.**

* * *

**Пĕр пӳлĕмлĕ хваттере (пĕрлехи лаптăк 30,5 тăваткал метр) хушса тӳлесе 3 е 2 пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр (сахăр завочĕпе чугун çул поселокĕсене сĕнмелле мар). Телефон: 5-20-03.**

* * *

**6х6 метрлă пура сутăнать. Урняк поселокĕнчи Фархат Валиахметовран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Космонавтсен урамĕнчи 19-мĕш номерлĕ çуртăн çуррине сутатпăр. Телефон: 5-18-94.**

* * *

**Чугун çул поселокĕнчи пур енчен те хăтлă 3 пӳлĕмлĕ хваттере сутатпăр е икĕ пĕр пӳлĕмлисемпе улăштаратпăр. Посредник телефонĕ: 2-10-58 (19.00 сехет хыççăн).**

* * *

**Туса пĕтермен çурта, мунчана, йывăç çурта, стройматериалсене икĕ пĕр пӳлĕмлĕ хваттерсемпе улăштаратпăр. Афган поселокĕнчи Бакиров урамĕнчи Хаметовран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Çурçĕр-Хĕвелтухăç микрорайонĕнче строительство материалĕсемлĕ строй-участока 1994 çултан кая мар туса кăларнă автомашинăпа улăштаратпăр е сутатпăр. Адрес: Комсомольская урамĕ,38.**

* * *

**1998 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче Альметьевскри нефть техникумĕ Сергей Алексеевич Толчин ячĕпе панă МТ 083332 номерлĕ çухалнă диплома тĕрĕс мар тесе шутламалла.**

* * *

**Пĕчĕк çемье пурăнмалли хваттер сутăнать. Адрес: Дружба урамĕ, 76-42 (17 сехет хыççăн).**

* * *

**Раис Хуснулович Нуруллин ячĕпе панă водитель удостоверениллĕ, тех. паспортлă, çăра уçиллĕ хура тир сумкăна тупакана Дружба урамĕнчи 60-мĕш çуртри 57-мĕш хваттере пырса памалла.**


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 892. З. N 2730.